ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ÇУТ ÇАНТАЛĂКПА УСĂ КУРАССИ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 11^1 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи чӗк уйăхĕн 29-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче çут çанталăкпа усă курасси çинчен" 1999 çулхи чӗк уйăхĕн 10-мĕшĕнчи 17 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1999, 32 №; 2002, 46 №; 2003, 53, 57 №-сем; 2004, 61 №; 2005, 65 №; 2006, 71 №; 2007, 73 №; 2008, 78 №; 2009, 80 №; 2010, 84, 86 №-сем; 2011, 90 №; 2012, 92 № (I том); "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 7-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7, 12 №-сем; 2014, 5, 11 №-сем; 2015, 2 №; 2016, 3, 10 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, ака уйăхĕн 4-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2019, çу уйăхĕн 15-мĕшĕ; 2020, пуш уйăхĕн 11-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2021, юпа уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 4-мĕшĕ; 2024, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ) 11^1 статйине çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) "а" пунктăн çиччĕмĕш тата саккăрмĕш абзацĕсене çакăн пек çырса хурас:

"пулма пултаракан сиен Чăваш Республикин территорийĕнче физически сăпатсен пурнăçĕпе сывлăхне, тавралăха, физически сăпатсемпе юридиче-

ски сăпатсен пурлăхне сиен кӳме пултарнă тĕслĕхре гидротехника сооруженийĕнче авари пулнă чухне пулма пултаракан сиенĕн виçине тĕрĕс палăртас пайра пулма пултаракан сиен тĕлĕшпе килĕштермелли йĕркене çирĕплетесси;

пулма пултаракан сиен Чăваш Республикин территорийĕнче физически сăпатсен пурнăçĕпе сывлăхне, тавралăха, физически сăпатсемпе юридически сăпатсен пурлăхне сиен кӳме пултарнă тĕслĕхре гидротехника сооруженийĕнче авари пулнă чухне пулма пултаракан сиенĕн виçине тĕрĕс палăртас пайра пулма пултаракан сиен тĕлĕшпе килĕштересси;";

2) "г" пунктăн улттăмĕш абзацне "çĕр айĕнчи пуянлăха" сăмахсем хыççăн ", тĕпчев ĕç-хĕлне пурнăçласси" сăмахсем хушса хурас;

3) "д" пунктра:

а) çакăн пек çырса çирĕм пиллĕкмĕш тата çирĕм улттăмĕш çĕнĕ абзацсем хушса хурас:

"тĕп нефтепроводсене, нефть продукчĕсен пăрăхĕсене тата вĕсен уйăрайми технологи пайĕсене тăвас, юсаса çĕнетес, тĕпрен юсас ĕçсене пурнăçлама кирлĕ çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене шыраса тупас тата кăларас тĕллевпе çĕр айĕнчи вырăн пĕлтерĕшлĕ пуянлăхсен Раççей Федерацийĕн "Çĕр айĕнчи пуянлăхсем çинчен" саккунĕн 2^3 статйин пĕрремĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă лаптăкĕпе усă курмалли правăна аукцион ирттермесĕр парасси çинчен;

тĕп газопроводсене тата вĕсен уйăрайми технологи пайĕсене тăвас, юсаса çĕнетес, тĕпрен юсас ĕçсене пурнăçлама кирлĕ çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсене шыраса тупас тата кăларас тĕллевпе çĕр айĕнчи вырăн пĕлтерĕшлĕ пуянлăхсен Раççей Федерацийĕн "Çĕр айĕнчи пуянлăхсем çинчен" саккунĕн 2^3 статйин пĕрремĕш пайĕн 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă лаптăкĕпе усă курмалли правăна аукцион ирттермесĕр парасси çинчен;";

ă) çирĕм пиллĕкмĕш – вăтăр çиччĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн çирĕм çиччĕмĕш – вăтăр тăххăрмĕш абзацсем тесе шутлас;

б) çакăн пек çырса абзац хушса хурас:

"çĕр лаптăкĕ çĕр айĕнчи анлă сарăлнă пуянлăхсем (вĕсен запасĕсене çĕр айĕнчи пуянлăхсен запасĕсен патшалăх балансĕпе шута илнĕ) упранакан чикĕсенче тата (е) уйăрса панă сăрт-ту евĕр усă курма панă çĕр айĕнчи вырăн пĕлтерĕшлĕ пуянлăхсен лаптăкĕсен чиккисенче вырнаçнă чухне çĕр айĕнчи пуянлăхсене шыраса тупма тата кăларма кирлĕ çĕр лаптăкĕсен чиккисенче капиталлă строительство объекчĕсене тăвассине килĕштерес енĕпе ĕçлекен комисси туса хурасси;".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи раштав уйăхĕн 3-мĕшĕ
88 №